**Гордеев, Д. Халăхри çын : Кузьма Турхан 80 çул тултарнă май / Д. Гордеев // Ялав. – 1995. – № 10. – С. 89-93.**

***Денис Гордеев***

## Халăхри çын

Халăх çинчи çынсем тата халăхри çынсем пулаççĕ. Халăх çинчисем унта шăв-шав çĕклеççĕ, кунта кĕр-кĕр хускатаççĕ. Вĕсем телеэкран çинчен кайма пĕлмеççĕ, вĕсен сасси эфирта янрасах тăрать. Митингсемпе пикетсенче те вĕсемех. Вĕсемех выçă тытма тĕп площаде тухса лараççĕ. Яланах халăх ячĕпе калаçаççĕ, халăхшăн тăрăшатпăр теме нихçан та манмаççĕ, анчах мĕнпур ĕçе хăйсен хырăмĕшĕн тăваççĕ. Хăйсен ячĕсене халăхра хăварас тени вĕсене ыйхăсăр хăварать, апат анми тăвать. Хăйсем куçран çухалсанах, сасси йăмсанах, ячĕсем те халăх асĕнчен тухаççĕ.

Халăхрисене сăнран та пурте палламаççĕ. Апла пулин те, вĕсен ячĕсене пĕлеççĕ. Пĕлеççĕ те хисеплĕн асра усраççĕ. Хăйсем пирĕнтен уйрăлса кайсан, вĕсен ят-сумĕ татах та ÿсет.

Шăпах çакăн пеккисенчен пĕри Кузьма Турхан (Кузьма Сергеевич Сергеев). Вăл пухусенче хĕрсе, хивреленсе калаçнине те темшĕн пĕрре те астумастăп. Ларсан-ларсан, вырăнтан пĕр-икĕ сăмах персе хунипех çырлахатчĕ. Ку унăн кăмăл екки пулман. Пурнăçĕ асăрханулларах пулма вĕрентнĕ ăна. Пĕчĕк йышра вара хавхалансах калаçатчĕ.

Тепĕр енчен 1949 çултанпах профессиллĕ писатель пулса пурăннă, пултарулăх ĕçне кăна тунă, шавлă йыш айккинче çÿренĕ çын хăйĕн «хупăлчине» хупăнма ĕлкĕрнĕ, пĕчченлĕхе хăнăхнă пулсан та, ĕçтешсемпе хутшăнас, литературăри ĕç-пуçа вĕсемпе пĕрле сÿтсе явас, çын шухăшне пĕлес, хăй шухăшне калас килнех унăн. Писательсенчен чылайăшĕ хăй çырнă произведение чи лайăххи, чăн-чăн шедевр тесе шутлать. Тиркерех калаçнине илтсен, чăнласах кÿренет. Кузьма Сергеевичăн çакăн пек йăла çукчĕ. Хăйĕн произведенийĕсене вăл айккинчи çын пек хаклама пĕлетчĕ. Час-часах тăвас тенине тăвас тенĕ пек хайланманшăн кулянатчĕ. Шеллесе калаçмалли унăн тупăнсах тăратчĕ. «Сĕве Атăла юхса кĕрет» романăн виççĕмĕш кĕнеки пичетленсе тухсан, Кузьма Сергеевич хăйне тивлетлĕн туйма тытăннăччĕ. Çапла пулмасăр! Пĕрремĕш кĕнеки 1960 çултах пичетленсе тухнă, виççĕмĕшĕ вара 16 çул иртсен. Çырма вăрçă хыççăнах пуçăннă. Çавăн чухне писательсен Союзне пырса çÿреме вăхăчĕ тупăнсах тăратчĕ. Вăл хăй те, литература тĕпчевçисем те, эпир те, вулакансем, ку писателĕн тĕп ĕçĕ пулнине лайăх ăнланаттăмăр. Писатель шухăшланине пурнăçлама пултарнăшăн Кузьма Сергеевичпа пĕрлех савăнаттăмăр. Вулаканăн, паллах, хăйĕн савăнăçĕ. Халăх

историйĕн хальччен пĕлмесĕр пурăнна страницисене уçса пăхма май тупăнчĕ. Писателĕн хăйĕн савăнăçĕ. Вăл кун хыççăн кун, çул хыççăн çул унран хăпми çӳренĕ персонажсене чĕрĕ сывлăш кĕртме, вулакан умне чĕррĕн тăратма пултарчĕ.

Виçĕ кĕнекеллĕ çак романа хисеплĕ ятпа палăртма вăхăт çитсен, писательсен Союзĕн правленийĕн ун чухнехи председателĕ Николай Степанович Дедушкин Турхана хăй пӳлĕмне чĕнсе кĕртрĕ. Эпир, коридорта пирус сăвăрса тăракансем, Кузьма Сергеевич председатель патĕнчен тухнă-тухманах ăна сырса та илтĕмĕр.

– Мĕн айăпа кĕнĕ вара эс? – шӳтлесе ыйтать пĕри.

– Виç кĕнекеллĕ роман çырсан та айăплă пулмасан юрамасть, – тет Кузьма Сергеевич.

– Мĕнле айăпласшăн вара сана?

– «Халăх писателĕ» ят парасшăн. Ячĕпе пĕрле кăштах укçа та парсан, килĕшнĕ те пулăттăм. Кирлĕ мар мана унашкал ят, терĕм. Вара патшалăх премине илме тăратапăр, терĕç. Преми, епле тесен те, укça... Ăна паччăрах...

Кузьма Сергеевич тухса кайма васкамарĕ. Союз библиотекине кĕрсе лартăмăр. Виçĕ кĕнекеллĕ роман çинчен пуçланнă калаçăвах малалла тăсрăмăр. Пурнăçĕ ăна асăрханулларах пулма вĕрентнине малтанах асăннăччĕ. Ун чухне пирĕн кашниннех ăшри цензор пулнă. Пĕрин кăраскер, теприн йăвашрахскер. Кузьма Сергеевич, хăй вăхăтĕнче Чăваш главлит пуçлăхĕнче ĕçленĕ çын, Турхан писателе пĕрре те шеллеме пĕлмен иккен. Çавăн чухне Кузьма Сергеевич питĕ пăшăрханса калаçнине лайăх астуса юлтăм.

70-мĕш çулсенче шăпах çаран çинчи тĕрлĕ-тĕрлĕ чечексем сӳнме тытăннăччĕ, «пĕр-пĕтĕм совет халăхĕ» чăмăртанса çитнĕччĕ, пирĕн пек «вак» халăх çыннисене Мускаврa тӳрех калатчĕç: «Пăрахăр хăвăрăн пур-çук историйĕрте чакаланма, умрине курăр та унталла ăнтăлăр», – тетчĕç.

В. Ф. Каховскин «Чăваш халăхĕ пуçланса кайни» кĕнекине виçĕ çул умлăн-хыçлăн Чăваш кĕнеке издательствин тематика планне кĕртрĕмĕр. Мускав виçĕ хутчен те çакна çирĕплетмерĕ. Юлашкинчен, Мускав чиновникĕсене ӳкĕте кĕртме пултăр тесе, авторпа килĕшӳ турăмăр, гонорарăн 60 процентне тӳлерĕмĕр. Çук, Мускав ку хутĕнче те ӳкĕте кĕмерĕ. Кузьма Сергеевичăн виççĕмĕш кĕнеки шăпах çак çулсенче пичетленсе тухрĕ. Авторĕ хăй те, редакторсем те вĕçлеке кĕтессине пурне те каса-каса тикĕслерĕç. Патшалăх цензури тытса ан чартăр тесе ĕнтĕ.

Кĕнеке пичетленсе тухсан, Кузьма Сергеевич çакăншăн кулянма тытăнчĕ.

1552 çулта Хаяр Иван Хусана парăнтарсан, юнлă эпизодсем питĕ те питĕ нумай пулса иртнĕ. Вĕсене писатель пурне те пĕлнĕ. Чылайăшне çыра-çыра

кӑтартнӑ. Ӑшри цензорӗ хистенипе вӗсене ал ҫырӑвӗнче турта-турта пӑрахма тивнӗ. Ҫак эпизодсене вӑл питӗ асапланса та сӑнарласа ҫырнӑ пулнӑ.

Хусанта чӑвашсем йышлӑн пуҫ хунине, хула урамӗ тӑрӑх чӑваш юнӗ ҫурхи шыв пек шарласа юхнине ҫырса кӑтартнине катертнӗшӗн шутсӑр пӑшӑрханса калаҫатчӗ.

– Ҫырнине ан ҫухатӑр та тепре кӑларнӑ чухне хушса хурӑр, — теме кӑна пултартӑм эпӗ.

– Тепре кӑларасси темӗн ҫав... Самани хальхи пекех пулсан, истори романӗсене пичетлеме те пӑрахӗҫ, – иккӗленчӗ вӑл.

Паян пурӑннӑ пулсан, паллах, писатель ӑшри цензор хистенипе тикӗсленӗ вырӑнсене тепӗр хут тӳрлетсе тухнах пулӗччӗ. Хӑйсӗр пуҫне ӑна никамах та тӑваймӗ. Трилогие тепӗр хут кӑларма вӑхӑт ҫитсен, тен, пичетленес текста архивра юлнӑ ал ҫырӑвӗпе пӗр килтерме май тупӑнӗ. Ҫаплах пултӑрччӗ.

«Сӗве Атӑла юхса кӗрет» романа вуланӑ чухне пӗр шухӑш пуҫа пырса кӗнӗччӗ: ара, кун тӑрӑх чӑваш архаизмӗсен словарьне тума пулать-ҫке. Пӗр палланӗ чӗлхеҫе ҫакна тума сӗнсе пӑхрӑм. Алӑ ҫулчӗ ҫеҫ: мӗн ҫӗнни тупма пулӗ унта, тӑрӑн, турхан йышши сӑмахсене чӗлхеҫӗсем ахалех пӗлеҫҫӗ... Чылай вӑхӑтран, эпӗ манса кайсан, ҫак чӗлхеҫӗ каҫару ыйтнӑн каласа хучӗ:
– Чӑваш архаизмӗсен словарӗн тӗпне хывмалӑх сӑмах пур унта.

Ун чухне ҫамрӑк ҫыравҫӑсен шутӗнче ҫӳреттӗм те, хамӑн ентешӗме ҫӑвартан пӑхсах итлеттӗм. Истори шухӑшлавӗ пачах ҫуккипе эпӗ фактсене танлаштарса, шухӑша аталантарса истори пӗтӗмлетӗвӗсем тӑваймастӑп, ҫавӑнпа кам та пулсан ҫырнине ним турткаланмасӑр ӗненетӗп. Турхан трилогийӗнчи асра юлнӑ событисем чӑнах пулнӑ-и тесе ҫапах авторӗнчен хӑйӗнчен ыйта-ыйта пӗлес килетчӗ. Тӗл пулмассерен Кузьма Сергеевича йӳтетме тытӑнаттӑм. Вӑл вара эпӗ ыйтас тенӗ событирен урӑххисем ҫине куҫа-куҫа каятчӗ. Ниҫта ҫырманнине, хӑйӗн пуҫӗнче кӑна пуррине мӗн чухлӗ каласа паман-ши вӑл манна? Паян-ыран ҫӗре кӗрес ҫын пек марччӗ те, ҫавсене ҫыра-ҫыра хума та тавҫӑру ҫитмен. Вӑхӑчӗ тупӑнӗ-ха, хӑйех ҫырса хӑварайӗ тесе шутланӑ.

– Ҫавӑн чухлӗ материала ӑҫтан тупайрӑр? – тесе ыйтрӑм пӗринче.

– Шырасан тупӑнать, – тесе хуравларӗ кӑна.

Трилоги ҫырма лариччен питӗ нумай документ пуҫтарнӑ вӑл. Ун чухлӗ документ историксен те пулман-тӑр. Наука тӗпчев институчӗ унӑн килӗнчех пулнӑ. Историксем те канашланӑ унпа, пӗлменнине ыйта-ыйта пӗлнӗ.

Виҫҫӗмӗш кӗнеке пичетрен те тухма ӗлкӗрейменччӗ, В. Д. Димитриев профессор «К. С. Турханӑн «Севе Атӑла юхса кӗрет» роман пирки историк асӑрхаттарнисем» ятлӑ статья ҫырчӗ. Вӑл Чӑваш наука тӗпчев институчӗ кӑларнӑ статьясен пуххинче 1973 ҫулта пичетленсе тухрӗ.

Татах астутарас килет. 70-мӗш çулсем историре утюгласа якатнӑ сулсем пулнӑ. Мускав историкӗсем калапинчен иртме юраман. Çавӑнпа та чӑваш историкӗсем мӗн çырма юранине, мӗн юраманнине питӗ уятчӗç. Апла пулин те, эпир ун чухнех истори чӑнлӑхне пӗлтӗмӗр.

Кузьма Сергеевич пурӑна киле трилогие хӑйӗн тӗп ӗçӗ тесе шутлама та пӑрахрӗ. Çавнашкалах пысӑк калӑплӑ та пысӑк пӗлтерӗшлӗ урӑх произведенисем пирки шухӑшлама тытӑнчӗ. Хӑй те ашшӗ-амӑшӗсӗр тӑрса юлнӑскер, ача çуртӗнче çитӗннӗскер, 1920 çулхи выçлӑх вӑхӑтӗнче чӑваш ачисене Мускав çӑлса хӑварни çинчен произведени çырас ӗмӗтпе хивреленсе çӳретчӗ. Материал пуçтарма тытӑннӑччӗ. Мускаври ача çурчӗсенче ӳснисемпе чылайӑшӗнпе тӗл пулма ӗлкӗрнӗччӗ.

Вӑл хулӑн тетрадь çине йӗрке сиктермесӗр çыратчӗ. Кам мӗнле хӑнӑхнӑ, çапла çыртӑр-ха. Кузьма Сергеевич пӗр произведение те умӗнчен пуçласа çырма тытӑнман пулӗ. Малтан уйрӑм-уйрӑм сыпӑксем шӑрçалатчӗ. Тепӗр чухне вӗсене очерк тесе пичетлетчӗ. Кайран пысӑк произведени сыпӑкӗ туса яратчӗ.

20 çулхи выçлӑх вӑхӑтӗнчи чӑваш ачисен кунçулӗ çинчен калакан документсемпе асилӳсем питӗ те питӗ асаплӑн тупӑннипе тепӗр темӑна ӑша хыврӗ. Чӑваш çыравçисене Çӗпӗрелле мӗн йыхӑрать-ши? Генсен аса илӗвӗ-ши? Хветӗр Уяр та иленнӗ унта. Ӑна курса-ши, урӑххипе-ши, Кузьма Сергеевич та Çӗпӗрелле çул хывма шутларӗ. Ун чухне Литература фончӗ пӗр уйӑх таран пултарулӑх командировкине яма пултаратчӗ. Хамӑр республикӑна каймалла-тумалла пулсан ыйтӑва хамӑрах татса параттӑмӑр. Çӗпӗре командировкӑна яма Мускав ирӗкӗ кирлӗччӗ.

Çапла каласа ӑнлантартӑмӑр та Кузьма Сергеевича, алӑ сулчӗ те хӑйӗн укçипех тухса кайрӗ. Таврӑнсан, пӗр хушӑ питӗ хавхаланса çӳрерӗ. «Çӗпӗрти тӗлпулусем» ятпа очерксемпе калавсен кӗнекине те кӑларчӗ. Анчах очерксене вӑл çула майӑн пулакан япала кӑна тесе шутлатчӗ. Иакинф атте йӗрӗ çине ӳкрӗм тенӗччӗ. Хальччен пурте пӗлмен, пичетленмен документсем тупрӑм тесе савӑнатчӗ.

— Ниушлӗ Иакинф Бичурин çинчен пӗтӗмпех çырса пӗтермен? «Время собирать камни», «Великая китайская стена» романсене чӑвашла та куçарма тытӑнчӗç, — иккӗлентӗм эпӗ.

Хӑйӗн хӑнӑхнӑ манерӗпе лупперрӗн хускалса илчӗ те хӗремесленсе калаçма пикенчӗ. Писатель пуçӗпе чунӗнче çӗнӗ роман çуралнине ӑнлантӑм вара. Мӗнле пулсан та, пулӑшас килчӗ.

1984 çулхи çулла Чулхулара Раççейри историпе культура палӑкӗсене сыхлакан обществӑн пиллӗкмӗш съезчӗ пулса иртрӗ. Эпӗ унта делегат пулса хутшӑннӑччӗ. Съездра паллашнӑ нумай-нумай çынсенчен пӗри Тюмень облаçӗнчи Тобольскра ӗçлесе пурӑнакан чӑваш хӗрарӑмӗ пулчӗ. Çак

таврапĕлӳçĕ хĕрарăма съездра сăмах пачĕç. Калаçăвĕнче чăваш сĕмĕ сисĕнчĕ те, кану вăхăтĕнче унпа тĕл пултăм. Чăвашранах куçса кайнăскер пулчĕ. Тобольскра çакскер хăй пек хастар çынсене пуçтарнă та субботниксемпе воскресниксем ирттере-ирттере юхăннă чиркусемпе храмсене, ытти историпе культура палăкĕсене тирпейлесе тăнă. Кун çинчен Мускавра та пĕлнĕ. Съезда хисеплĕ хăна пулса хутшăнма чĕннĕ. Иакинф атте Тобольскра та пулнине тĕпчет иккен хăй. Кузьма Сергеевича çакăн çинчен каласа патăм та, çавăнтах адрес ыйтса илчĕ.

Çыру çӳретме тытăннă-ши, пĕр-пĕрне усă кӳрейнĕ-ши? Çакна темшĕн ыйтса пĕлмен вара. Сăлтав тупăнман ĕнтĕ.

Тĕплĕн ĕçлеме хăнăхнăскерне пултарулăх планĕсене пурне те пурнăçа кĕртме май килмерĕ. Вăл çырайман произведенисене урăх никам та çыраймĕ.

Элчел хĕçан çитессине пиртен никам та пĕлмест. Кузьма Сергеевич та ун пирки шухăшласа пурăнман. Ĕçлес, çырас хавал кăна пулнă унра. Вăрçă хыççăнах пичетлесе кăларнă «Йăмраллă ял» романне çĕнĕрен çырас шухăшне те шухăш халлĕнех хăйпе пĕрле илсе кайрĕ.

Ача чухнехи тĕлпулусем асра тарăн вырнаçса юлаççĕ. Аслă Каçалти вăтам шкулта вĕреннĕ чухне чăваш чĕлхипе литературин учителĕ Анна Павловна Кокорева пуçарнипе «Кĕтне хĕрринче» повесть тăрăх вулакансен конференцине ирттерчĕç. Турхан хăй те килет тенине пĕлсен, ун умĕнче намăс курас мар тесе, тĕплĕн хатĕрлентĕмĕр. Ку таранччен пĕр кĕнекене те çаплах тимлесе вуламан пулĕ. Каялла таврăна-таврăна, уйрăм вырăнсене темиçешер хут вуларăм. «Тĕрĕсмарлăхсем» куç тĕлне пулсах пычĕç. Эпир хамăр та Кĕтне ачисем, пире улталаймăн. Вăл мĕнлине питĕ лайăх пĕлетпĕр. Писатель хăй килсен, çав «тĕрĕс мар çырнă вырăнсене» кăтартса парăпăр-ха тенĕччĕ те, Кузьма Сергеевич сăмах илсен, шăпарт пулса лартăмăр.

Каçал тăрăхне кайма сăлтав тупăнсан, турткаланса тăмастчĕ. Анчах хăй çуралнă Вăрманхĕрри Чурачăкра темиçешер кун хăна пулнине астумастăп.

Халăх умне тухсан, ăшри сасăпа калаçатчĕ. Хăлаçланмасăр, вĕçкĕнленмесĕр. Çавăнпа ăна ватти те, вĕтти те тимлесе итлетчĕ. Каласа кăтартмалли, çырса хăвармалли пекех, çав тери нумайччĕ.

Кашни писателĕн хăйĕн лабораторийĕ, тетпĕр. Ку çапла ĕнтĕ. Пиртен уйрăлса кайсан, унăн кĕнекисем, архивĕ пире валли юлать. Анчах писатель лаборатори тенине хăвараймасть. Унта тимлесе ĕçлесе пултаруллă çамрăк, тен, Турхан ĕлкĕрейменнине çырнă пулĕччĕ? Ун пек пулаймĕ çав. Çĕр çине пĕр Турхан кăна килмелле тунă. Çавăнпа хаклă та вăл пирĕншĕн.